


# «Тăван чĕлхе: чăваш чĕлхи – пин чĕлхерен эс чи хакли»

# Апрелĕн 25-мĕшĕ

# Чăваш чĕлхи кунĕ



**Иван Яковлевич ёмĕр тăршшĕпех чăваш халăхĕн ертӳçи пулнине хăйĕн пархатарлă ĕçĕсемпе кăтартса панă.**

 

*«Анне чĕлхи - халăхăн чи пуян ăс-хакăлпа кăмăл-сипет хăвачĕ, унăн тĕп тĕрекĕ. Ачисене тăван чĕлхене вĕрентмен амăшĕ вĕсене ĕмĕрлĕхех хăйĕнчен пистерет, пĕр-пĕрин хушшинчи чун çыхăнăвне татать» - тесе ăс панă Иван Яковлевич Чĕмпĕрти шкулĕнче пĕлӳ пухакан пулас учительсене.*








Анне чĕлхи вара
чи малтанах сăпка
юрринчен, килти
хутшăнуран, урамри
вăйăран пуçланать
ачасемшĕн.









**Чăваш юррин илемлĕхĕпе пирĕн юратнă композитор Юрий Несторович çырнă юррисен пуххисенче палашма пулать. Пирĕн библиотекăра унăн «Тăван кил ăшши» тата «Телей пултăрччĕ ялан» пуххисем пурришĕн эпир питĕ савăнатпăр.**

# Тăван чĕлхем - чăваш несĕлĕн çăл куçĕ.



## Иван Яковлевич Яковлев


БУКВАРЬ
ДЛЯ ЧУВАШЪ
СЪ ПРИСОЕДИНЕНІЕМЪ
РУССКОЙ АЗБУКИ.
ҪĂВАШ КĔНЕКИ.
ПРАВОСЛАВНАГО МИССІОНЕРСКАГО ОБЩЕСТВА.
СИМБИРСКЪ.
Типографія А. Т. Токарева


БУКВАРЬ
ДЛЯ ЧУВАШЪ
СЪ ПРИСОЕДИНЕНІЕМЪ РУССКОЙ АЗБУКИ.
ҪĂВАШ КĔНЕКИ.
ИЗДАНІЕ ПРАВОСЛАВНАГО МИССІОНЕРСКАГО ОБЩЕСТВА.
КАЗАНЬ.
Типог. М. А. Гладышевой, Никол. площ. домъ Курманаева.
1880.


ТЪВАШ АДИЗЕНЕ
С̆ЫРЪВА ВЪРЕНМЕЛЛИ КНЕГЕ.
БУКВАРЬ,
религіозно-нравственныя наставленія, молитвы и избранныя мѣста изъ Священнаго Писанія,
изложенныя на нарѣчіи низовыхъ чувашъ, или чувашъ анатри.
КАЗАНЬ.
1873.



Чăвашсем хăй тĕллĕн пĕтесси, историре йĕрсĕр-мĕнсĕр çухаласси патне илсе пыма пултарнине тата тăван халăх культурипе чĕлхине упраса хăварма наци шкулĕ кирлине аван ăнланнă 16 çулхи çĕр виçекен. Чăваш пулса çуралса вырăссем хушшинче çитĕннĕ пулин те чăваш халăхне çутта кăларма çирĕп тĕллев лартать.




Кĕнеке ялан пирĕнпе юнашар. Мĕн çинчен пĕлес килет, кĕнеке калать. Вулама кăна ан ӳркен. Çавăнпа кĕнекене шанчăклă тус теççĕ.



**Чăваш кĕнекисене халăх хушшинче сарас тĕллевпе нумай пулмасть пирĕн Республикăра Чăваш Республикинче пичетленнĕ кĕнекесене халалланă «Литературăллă Чăваш Ен: çулталăкри чи вуланакан кĕнеке» фестиваль-конурс иртрĕ.**




2017 çулта Чăваш кĕнеке издательстви Николай Сорокин çырнă «Аттеçĕм Атăл» роман-трилоги виççĕмĕш кĕнекине пичетлерĕ. Çак виçĕ томлă романĕнче 20-21 ĕмĕрти Тутарстан, Раççей хресченĕсен, хула çиннисен Граждан, пĕтĕм тĕнче вăрçисемпе хуçăлнă тата большевиксен пусмăрне чăтса ирттернĕ хурлăхлă шăпи çинчен тĕплĕн çырса кăтартнă.




Хветĕр Агивер çырнă «Йĕпхӳри сасă» - этем илемне тĕпчекен кĕнеке. Автор йывăрлăхсем умĕнче те çын чысне яман сăнарсен тасалăхне кăтартать. Кĕнекере «Йĕпхӳри сасă» калаври ăнсăртран шар тӳсекен Родион пурнăçĕ пӳкле вĕçленмелле пекчĕ. Анчах ăнсăртран пырса тухнă ырă чĕреллĕ Варвара-Магдалина уншăн чăн-чăн çăлăнăç, ĕмĕр сӳнми çул хунарĕ пулса тăрать.

.




*Марина Карягина çырнă «Кĕмĕл тумлă çар» сăвăлла трагеди-философилле тарăн шухăшлă хайлав. «Кĕмĕл тумлă çар» трагеди инçетри, тахçанхи чăваш йăхĕ çинчен. Йăхра пĕр арçын та юлман, пĕрисем халăха сыхласа пуç хунă, теприсем тăван йăхран ютшăнса тăшман енне куçнă. Кил вучахне сыхлас, ачасене ÿстерес, хамăр тĕне тытса пырас нуша - йăлтах хĕрарăмсем çине тиеннĕ.*





Çак кӗнекене халалласа нумай пулмасть эпир литературăпа музыка каçӗ ирттертӗмӗр. Пирӗн мероприятине кӗнеке авторӗ Марина Карягина та хутшăнчӗ.




Кунта автор пурнăçра куçа курăнман хăватлă вăйсем чăнах пуррине çирĕплетекен фактсемпе пулăмсем сахал мар тĕл пулни çинчен каласа панă. Тепре мăнкăмăллăх çинчен шухăш çивĕчлетет автор. Геройсен трагедийĕнче çак сиенлĕ кăмăл-сипет палли мĕнле вырăн йышăнни çинчен вулакан повеçе вуласа тухса пĕлме пулать.




Çак кĕнекене повеçсемпе калавсем кĕнĕ. Тĕп сăнарсем - çамрăксем, вĕсем пурнăçăн анлă çулĕ çине тухаççĕ кăна-ха, яш-кĕрĕме юратупа пĕрле тĕрĕслев витĕр кăларакан йывăрлăхсем кĕтсех тăраççĕ-мĕн. Сăнарсен пурнăçĕнче çывăх юлташĕсем те - чĕрчунсем - пысăк вырăн йышăнаççĕ. Яланах хуçисене тараватскерсене пĕрисем чунтан юратаççĕ пулсан теприсем кӳрентернишĕн пĕртте ӳкĕнмеççĕ.




Романри ĕç-пуç Иккĕмĕш Кĕтерне патша вăхăтĕнче пулса иртет. Тĕп сăнар - чăваш салтакĕ Медведев (Упа). Ăна, çамрăклах тăлăха юлнăскере, салтака илеççĕ. Хĕсметре тăнă чух Раççейĕн хĕрарăм хуçипе ытла та çывăх «паллашма» шăпа пӳрет, анчах Майра патша панă пурлăхпа вăл усă кураймасть. Тĕрмерен тарсан каччă Емельян Пугачев пăлхавçăн шанчăклă çыннисенчен пĕри пулса тăрать.




*Кĕнекене тăватă хайлав кĕнĕ. Вĕсенче кашнинчех тăванпа туслă пурăнмалла, çуралнă кĕтесе манмалла мар текен шухăш мала тухать. «Тупа» романра Йăкăнатпа Калистрат йĕкĕрешсем пĕр-пĕрне нихăçан та пăрахмастпăр тесе тупа тăваççĕ. Çитĕнсе çитсен пурнăç çулĕ вĕсене тĕрлĕ еннелле уйăрса ярать, тĕрлĕ йывăрлăх кăларса тăратать.*




**Кĕнекере автор чăваш ялĕн, хресченĕн, интеллигенцийĕн пурнăçĕ çур ĕмĕр хушшинче мĕнле аталанса, çĕнелсе пынине анлăн сăнарланă.**




**Ку кĕнекене хăйĕн пурнăçĕ пирки аса илсе çырни, «Сарпике», «Вăрланă пике» юмахсем, «Хунямa», «Майлаштарчĕç», «Маншăн пулсан – хут купăс...» пьесăсем кĕнĕ. Кĕнекепе пĕрле Кĕлпук Мучи кулăшла тата сатирăллă хайлавсене вуланине çыртарнă диск пур. Хайлавĕсене Чăваш радио фондĕнчен илнĕ.**




Нумай хура-шур тӳснĕ хыççăн Маша тинех телейлĕ: ывăлĕсем çитĕннĕ ĕнтĕ, хăйсен пурнăçне йĕркелеççĕ, çумра савнă çын пурри çунат хушать. Кашни куна савăк кăмăлпа кĕтсе илсе юратнă ĕçе васкать вăл. Шанчăклă юлташĕсем вара кирек хăçан та пулăшма хатĕр.
Анчах пурнăç яланах тӳрĕ çулпа кусмасть. Инкек кĕпе аркинчен те çывăхрах-мĕн. Шăпа Машăна çĕнĕ тĕрĕслевсем ярса парать.



Кулăшсăр пурнăç кичем те тĕссĕр пулĕччĕ. Ырă шӳт йывăрлăха сирет, кăмăла çĕклет. Йĕплесе илни вара çитменлĕхсемпе кĕрешме пулăшать, чăнлăха суяран уйăрма вĕрентет. Çак шухăш кăшăлласа тăрать те кĕнекери калавсемпе юмахсене тата юптарусене.




Сăнавçă ача кашни утăмра
тĕлĕнтермĕш асăрхать.
Тантăшĕсен хутшăнăвĕнче
те, çут-çанталăкри
улшăнусенче те хăйне
евĕрлĕхсем курса ырăпа
усала, илемпе
килпетсĕрлĕхе уйăрма
вĕренет; аслисене итлеме,
Тăван çĕршыва хаклама,
çынлăха, тăванлăха
хисеплеме хăнăхать



# «Эпир пулнӑ, пур, пулатпӑр»

Петӗр Хусанкай

Савар, мухтар чĕлхемĕре,

Ăна усрар чыс-хисепре.

Унпа эпир ĕçе вĕреннĕ,

Çӳл тӳпене çити çĕкленнĕ.

Упрар тăван чĕлхемĕре,–

Чун-чĕрери хĕлхемĕре



Ваçлей Давыдов-Анатрин